ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ КУЛЬТУРА ЕТКЕРЕН ОБЪЕКЧЕСЕМ (ИСТОРИПЕ КУЛЬТУРА ПАЛĂКЕСЕМ) ÇИНЧЕН" САККУНЕН 16 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи юпа уйăхĕн 24-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче культура еткерĕн объекчĕсем (историпе культура палăкĕсем) çинчен" 2005 çулхи ака уйăхĕн 12-мĕшĕнчи 10 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2005, 62 №; 2006, 69 №; 2008, 75, 77 №-сем; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7, 12 №-сем; 2015, 6 №; 2016, 3, 6 №-сем; 2017, 4 №; "Республика" хаçат, 2018, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 5-мĕшĕ; 2019, ака уйăхĕн 10-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 18-мĕшĕ; 2021, утă уйăхĕн 1-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2023, нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕ, 0000000000000759 №; "Республика" хаçат, 2023, юпа уйăхĕн 4-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕ) 16 статйине улшăну кĕртес, унта çакăн пек çырса 7^3-мĕш пункт хушса хурас:

"7^3) патшалăх е муниципаллă вĕренӳ организацийĕнче (вĕсем культура еткерĕн асăннă объектĕнче вырнаçнă) вĕренекенсене малтанхи медицина-санитари пулăшăвне парас тĕллевпе патшалăхăн сывлăха сыхлас ĕç тытăмĕн тата муниципалитетăн сывлăха сыхлас ĕç тытăмĕн медицина организацийĕсене;".

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи юпа уйăхĕн 25-мĕшĕ
70 №